# Пĕтĕмпех çын валли тата çыншăн

**/Малалли. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.**
Республикăра пурăнакан кашни виççĕмĕш çын çав пулăшупа усă курнă. Эпир ĕç вырăнĕсене сыхласа хăварма тата 93 пин çынна ĕçрен кăларса ярассине сирме пултартăмăр. Чи кирли – патшалăх пултарулăх вăй-халне харпăр хăй тĕллĕн тӳрре кăларма лайăх майсем туса пачĕ. Предпринимательлĕх ĕçĕ-хĕлне йĕркелесе яма кăмăл тунă кирек мĕнле ĕççĕр çын та каялла тавăрса памалла мар йĕркепе 58,8 пин тенкĕрен пуçласа 500 пин тенкĕ таран пулăшу илме пултарчĕ. Çакнашкал майпа 6542 çын усă курчĕ. Пурнăçланă ĕçсем ĕççĕрлĕх шайне 1,4 процента çити чакарма май пачĕç, республикăра ĕççĕрлĕх шайĕ чакассин хăвăртлăхĕ Раççей Федерацийĕнчи кăтартупа танлаштарсан икĕ хут ӳснĕ.

Пирĕн ĕç рынокĕнчи çивĕчлĕхĕн коэффициенчĕ те палăрмаллах чакрĕ – ĕç шыракан пĕр çын пуçне пушă икĕ вырăна яхăн. Енчен те кризис тапхăрĕнче пĕр вакансие темиçе çын йышăнасшăн пулнă пулсан, халĕ пачах урăхла лару-тăру, икĕ пушă ĕç вырăнне пĕр ĕççĕр çын тивет, рабочи специальноçĕсем валли вара тата та ытларах. Çав хушăрах çакна палăртатăп: эпир техника професси училищисен пурлăхпа техника никĕсне палăрмаллах çирĕплетрĕмĕр. Çавна май халĕ пирĕн граждансем офисра вăй хуракансенчен ытларах укçа-тенкĕ ĕçлесе илме май паракан ĕç специальноçĕсем илме пултараççĕ, çакă вĕсене вĕренӳ çулйĕрне ăнланса суйласа илмелли майсем туса парать.

**Çĕнĕ ĕç вырăнĕсем йĕркелесси** – Правительствăшăн кăна мар, муниципалитет влаç органĕсемшĕн те чи пĕлтерĕшлĕ тĕллев. Эпир кăçал республикăн инвестици илĕртӳлĕхне ӳстерес енĕпе программа йышăнтăмăр, вăл çĕнĕ производствăсене аталантарассине гарантилеме тивĕç, çав производствăсем вара граждансене ĕç вырăнĕсене йышăнма кăна мар, хăйсен пĕтĕм пултарулăхĕпе пĕлĕвне çемье бюджетне пуянлатма, республика пурнăçне лайăхлатмашкăн ĕçлеме майсем уçаççĕ.

Чăваш Ене 2020 çулччен аталантармалли Стратегире ку енĕпе тĕрлĕ мерăсем палăртса хăварнă. Переченьре – 403 миллиард ытла тенкĕлĕх 95 инвестици проекчĕ. Пĕр çак сфера кăна малтанласа палăртнă тăрăх, 35 пин çĕнĕ ĕç вырăнĕ, çав шутра пысăк технологиллĕ производствăсенче – 10 пин ытла çĕнĕ ĕç вырăнĕ йĕркелеме май туса парать.

Республика пуçлăхĕ пулнă май, хамăн тĕллевĕме предприятисене çĕнĕ саккассем илме май килнĕ таран ытларах пулăшасси, хамăр таварсене тата пулăшу ĕçĕсене Раççей рынокне тухма май туса парасси евĕр куратăп. Çакă пурте республикăри ĕç вырăнĕсене аталантарма та, сыхласа хăварма пулăшĕ.

**Тивĕçлĕ ĕç укçи çынна** йĕркеллĕ пурăнма, кил-çуртне хăтлăх кӳме тата кăмăл тĕлĕшĕнчен хăйне лайăх туйма пулăшать. Ку енĕпе Чăваш Ен Правительствин политики пулăшу парассине малалла та çирĕппĕн тытса пыма тĕллев лартать. Бюджет сферинче вăй хуракан мĕн пур ĕçченĕн шалăвне эпир 13 процент чухлĕ ӳстертĕмĕр. Раççей Президенчĕ вĕрентекенсене пулăшас тĕлĕшпе лартнă тĕллеве пурнăçласа эпир вĕсен ĕç укçине кăна мар, педагогика персоналĕн – педагог-психологсен, социаллă педагогсен, çавăн пекех шкулчченхи вĕренӳ учрежденийĕсенче ĕçлекен воспитательсен – ĕç укçине те 30 процент чухлĕ ӳстертĕмĕр. Икĕ çулта сывлăх сыхлавĕнче врачсен ĕç укçи сахалтан та 31 процент, вăтам сыпăкри медицина ĕçченĕсен вара – 26,4 процент пысăкланмалла.

Патшалăх бизнеса пулăшас енĕпе пурнăçлакан чылай ĕç, Чăваш Ен территорийĕнче хăйсен çĕнĕ производствисене тата саккасĕсене вырнаçтаракан çĕршыври пысăк корпорацисемпе туслă хутшăнусем йĕркелени экономикăри ĕç укçи шайĕ çине активлă майпа витĕм кӳчĕç.

Ĕç укçи ӳсессин хăвăртлăхĕпе Чăваш Ен федерацин Атăлçи округне кĕрекен регионсен хушшинче кăçал çулталăк тăршшĕпех çиччĕмĕш вырăнта тăрать, ĕç укçин тулли шайĕпе /Мари Эл тата Мордва республикисенчен иртсе/ – 12-мĕш вырăнта. 6 субъектра кăна халăхăн укçа-тенкĕн чăн тупăшĕсем ӳснине шута илнĕ. Чăваш Ен çак йышра пиллĕкмĕш вырăнта.

Çакна палăртмалла: Чăваш Республикинчи организацисен ĕçченĕсен уйăхри номиналлă çырса хунă вăтам ĕç укçин кал-кал улшăнăвĕ самаях кăтартуллă: 2002 çултан пуçласа вăл 5,9 хут ӳснĕ, ĕçлеме пултаракан халăх валли çирĕплетнĕ пурăнма кирлĕ чи пĕчĕк виçе вара – 3,6 хут кăна. Çав хушăрах ĕç укçи шайĕ, отрасльсем тăрăх илес пулсан, палăрмаллах уйрăлса тăрать, анчах та пирĕн ĕç укçи 40 пинрен те иртекен ĕç вырăнĕсен хисепĕ йышланать. Экспертсен хаклавĕ тăрăх, 64 пин çын е организацисенче ĕçлекенсен пĕтĕм йышĕн 17 процентĕ 25 пин тенкĕ ытла ĕç укçи илет.

Çакăн пек факта та палăртатăп. Енчен те çулталăк каярах халăха ĕçпе тивĕçтерекен служба ĕç шыракансене пĕчĕк шайри – 4,5 пин тенкĕ тӳлекен – ĕç вырăнĕсем сĕннĕ пулсан, халĕ вакансисен рынокĕ палăрмаллах улшăнчĕ: ĕççĕррисене сĕнекен ĕç вырăнĕсен 40 процентĕнчен ытларах пайĕнче 10 пин тенкĕрен пысăкрах ĕç укçи шантараççĕ. Асăннă пушă ĕç вырăнĕсен çуррине уйăхри ĕç укçи – 15 пин тенкĕ. Ку кăтарту вара экономикăри вăтам ĕç укçи шайĕнчен те кăшт пысăкрах. Апла пулсан ытларах тупăш илес тесен, вĕренмелле тата пулас профессие тĕплĕн шухăшласа суйласа илмелле.

Ял хуçалăх отраслĕнчи тата вăрман хуçалăхĕнчи ĕç укçи – уйрăм тема. Ăна Раççейри вăтам шая çити ӳстерме пирĕн мĕн кирлине пурне те тумалла.

Ĕç укçи енĕпе пуçтарăннă парăм теми те çивĕч шутланать. Шел те, Чăваш Ен ку ыйтупа федерацин Атăлçи округĕнчи субъектсен хушшинче иккĕмĕш вырăнта тăрать, парăмсен хисепĕ – 106,8 миллион тенкĕ. Анчах та кунта çакна палăртмалла: асăннă парăмсен 95,4 проценчĕ конкурслă производство процесне пуçарнă, урăхла каласан, панкрута тухнă 14 организацин. Тата парăмсен 60 проценчĕ яхăн халь эпир япăх ятпа пĕлекен «САВВА» компанисен ушкăнĕнчи предприятисен. Хальхи вăхăтра Чăваш Республикин Прокуратури тата Чăваш Республикин Росреестр управленийĕ арбитражăн уйăрнă ертӳçисен ĕç-хĕлне тĕрĕслет. Тĕрĕслев вăхăтĕнче вĕсен ĕçĕ-хĕлĕнчи йĕркене пăснă тĕслĕхсене палăртаççĕ тата хăйсене панă полномочисен шайĕнче тивĕçлĕ мерăсем йышăнаççĕ.

Кашни гражданинăн пурнăç шайне палăртакан тепĕр фактор **сывлăх сыхлавĕ паракан пулăшусен пахалăхĕ тата вĕсемпе усă курма лайăх май пулни** шутланать. Асăрхаттаратăп: çав пахалăх граждансен сывлăхĕ çине те витĕм кӳрет çеç мар, республикăри демографи лару-тăрăвне те йĕркелет.

Пĕр енчен, эпир Чăваш Енре ача çураласлăха ӳстерес тата халăх вилессине чакарас кăтартусемпе Раççейре чи лайăххисенчен пĕри шутланатпăр. Пурнăç тăршшĕн виçи те пирĕн Раççейри кăтартуран пысăкрах тата эпир ăна сахалтан та 70 çула çитерме тĕллев лартатпăр. Юлашки çулсенче республикăра хальхи вăхăтри диагностика тата сиплев центрĕсем 20 яхăн йĕркеленĕ. Халĕ пирĕн граждансем операци тутарма унччченхи пек çĕр-шывăн тĕп хулинчи клиникăсене кайса çӳремеççĕ, пысăк ăсталăхлă медицина пулăшăвне Чăваш Енрех илеççĕ, çакă вĕсене çемье бюджетне перекетлеме май парать. Пирĕн инсульта пула вилесси – 35 процент, инфаркта пула – 15 процент, çул-йĕр çинчи транспорт инкекĕсенче аманнине пула 8 процент чакнă. Шыçă чирĕсемпе чирлекенсем чĕрĕ юласси 60 процент ӳснĕ. Иккĕмĕш çул Сывлăх центрĕсем ĕçлеççĕ, вĕсем сывă çынсен – аслисенне те, ачасенне те – сывлăхне упрама пулăшаççĕ, çапла майпа граждансене сывă пурнăç йĕрки çинчен шухăшлама хистеççĕ.

Тепĕр енчен, пирĕн поликлиникăсенчи черетсене пула йывăрлăх палăрать, мĕншĕн тесен малтанласа йышăнакан врачсем хăш чухне çитсех каймаççĕ тата ансăр специалистсем енĕпе те ыйту çивĕч тăрать. Çавна май пирĕн кадрсем çитменнипе çыхăннă ыйтăва мĕн пур майпа татса памалла. Граждансем черетсенче тата регистратурăра кăна мар, тепĕр чухне врач пӳлĕмĕнче те чунсăрлăхпа тата тӳрккеслĕхпе тĕл пулни палăрать.

Пысăк технологиллĕ медицина пулăшăвĕ сарăлса пыни малтанхи сыпăкри медицина пулăшăвне кая хăварма тивĕç мар. Ку тĕлĕшпе сывлăха сыхлас ĕçе 2 çулта модернизацилемелли программа çине пысăк шанăç хуратпăр. **Çак вăхăт хушшинче республикăра 25 медучреждение 4,5 миллиард тенкĕлĕх юсаса лайăхлатмалла, 2 пин ытла единица медицина оборудованийĕ** туянмалла, информацин çĕнĕ технологийĕсене ĕçе кĕртмелле. «Электрон регистратури» урлă врач патне çырăнмалли мел пирĕн патра анлă сарăлнă, унпа пĕтĕм республикипе кунне 3 пин ытла пациент усă курать. Çапах та эпĕ граждансене врач патне çырăнмалли майпа кăна мар, больница сайчĕпе те унти пулăшу пахалăхне витĕм кӳмели мел пек усă курма сĕнетĕп – сиплев пахалăхĕ çинчен хăвăр шухăшăрсене палăртса çырăр, сирĕн правăна пăснă тĕслĕхсене пурне те пĕлтерĕр.

Модернизацин пĕлтерĕшлĕ тĕллевĕ çавăн пекех медицина пулăшăвĕ памалли стандартсене ĕçе кĕртесси пулса тăрать. Çакă кашни пациентах кирлĕ шайра диагностика тата сиплев пулăшăвĕ илессине гарантилеме кăна мар, çавăн пекех тата сиплев тăкакĕсене ӳстерме, граждансене стационарсенче эмелпе тивĕçтерме, чирлĕ çынсене хăйсене эмел тата уйрăм препаратсем туянма сĕнекен тĕслĕхсене пĕтерме пулăшĕ.

Çапах та, ман шутпа, модернизацин тĕп тĕллевĕ пӳлĕмсен стенисене юсани тата оборудовани туянни кăна мар, врачпа чирлĕ çын хутшăнăвĕсене палăрмаллах улăштарни те пулмалла.

Табак туртассипе, наркоманипе, алкоголизмпа кĕрешес ĕçре парти тата общество тĕрĕслевĕн пĕлтерĕшне палăртса хăварас тетĕп. Патшалăх политикин сферинче эпир мĕн тумаллине пурне те тăватпăр, çапах та общество сиенлĕ çак йăласемпе хăй те кирлĕ пек кĕрешмесен эпир чылай çамрăк гражданина çухатма пултаратпăр, вĕсем вара– Чăваш Ен пуласлăхĕ.

Республика пуласлăхĕ эпир хамăр ачасем çине мĕнлерех пăхнинчен тата **вĕренӳ ĕçĕ-хĕлĕнчен** килет. Асăннă ĕç наци вăй-хăвачĕн аталанăвĕ, вăл конкуренци хуçаланакан хутлăхра пурăнма, наукăпа тачă çыхăннă производствăсенче ĕçлеме хатĕр пулнине витĕм кӳрет. Çакăн валли республикăра нумай ĕç тунă. Пирĕн ачасенчен 92 проценчĕ ытла хальхи условисенче вĕренет.

Шкул çурчĕсене тытăмлăн юсас, шкул компьютерĕсене тата автобус паркне çĕнетес, хăрушсăрлăх тытăмне аталантарас ĕçсене малалла тăсăпăр. Эпир ачасене вĕри апатпа тивĕçтерес ыйтăва тытăмлăн татса парас тесе тăрăшса ĕçлерĕмĕр, çапах та чи çывăх вăхăтрах ачасен апатланăвĕн хальхи вăхăтри индустрине йĕркелемелле. Вăл шкулти апатланăвăн пысăк пахалăхне тата унăн тĕрлĕ енлĕхне тивĕçтермелле. Шкул инфратытăмне малалла аталантарма муниципалитет районĕсен администрацийĕсен энерги перекетлес, вĕренӳ объекчĕсене юсас енĕпе программăсем туса хатĕрлемелле тата хăйсен сĕнĕвĕсене Чăваш Ен Вĕренӳ тата Финанс министерствисене тăратмалла.

Республикăра ачасене шкулчченхи вĕренӳ учрежденийĕсемпе тивĕçтерес лару-тăрăва тĕпрен лайăхлатас тĕлĕшпе пурне те тăватпăр. Иртнĕ çул валли палăртнă тĕллев те пурнăçланать. Çулталăк çурăран пуçласа 3 çула çитиччен ачасем пур, пепкисем ача садне çӳремен



çемьесене укçа тӳлесе саплаштарас енĕпе пилот проекчĕ пурнăçланать. Хальхи вăхăтра Шупашкарта, Канашра тата Шупашкар районĕнче çав пособие 4 пине яхăн çемье илсе тăрать, çакă асăннă муниципалитетсенчи ача сачĕ паракан пулăшу кирлĕ çынсен 85 проценчĕпе танлашать.

Шкулсене юсаса çĕнетнĕ шайра 4 пин вырăнлă шкулчченхи 235 ушкăн уçнă, çакă вăтамран **çĕнĕ 20 ача сачĕ тăвассипе танлашать.** Кăçал республикăра юлашки вунă çул хушшинче пуçласа **çĕнĕ сакăр ача сачĕ** тума пуçланă. Çитес çул тата 3 пине яхăн вырăн йĕркеленет. 2014 çул вĕçне вара 24 çĕнĕ çурт тата халь ĕçлекен ача сачĕсем çумне тĕксе 4 çурт тума палăртнă. Çемье, килти тата уйрăм çын тытса тăракан ача сачĕсем тăвассине шута илсен эпир шкулчченхи вĕренӳпе пурте усă курма пултарассипе çыхăннă ыйтăва, тĕпрен илсен, татса пама тивĕç.

Эпĕ вĕренӳ ĕçĕн содержанийĕпе çыхăннă çивĕч ыйту пирки калаçмастăп. Мĕншĕн тесен республикăра педагогсен самаях креативлă ушкăнĕ ĕçлет. Эпир нумай çĕнĕ пилот проекчĕсене пурнăçлатпăр, пирĕн пата инçетрен те вĕренме килеççĕ. Анчах та тепĕр пысăк пĕлтерĕшлĕ çивĕч ыйту пур, ун пирки эпĕ маларах, ĕççĕрлĕхпе кĕрешесси пирки хускатнă сăмахра асăнтăм. Ку – шкул ачисем хăйсен профессири вырăнне тупасси, экономика валли кадрсем хатĕрлесси, професси пĕлĕвĕ паракан учрежденисенчен вĕренсе тухакансем республикăри ĕç рынокĕнче кирлĕ пулнине ӳстересси. Пирĕн ку енĕпе кирлипе сĕнӳ хушшинчи уйрăмлăха 10 процентран ытла мар шая çитерме тăрăшмалла /хальлĕхе вăл 55 процентпа танлашать/. Çакă професси пĕлĕвĕ паракан шкул темиçе диплом илекен **выпускниксене** кăна мар, **чăн пĕлӳллĕ тата чăн ăсталăхлă, конкурентлă специалистсене** вĕрентсе хатĕрлемеллине пĕлтерет.

Чăваш Ен Вĕренӳ министерствин вырăнти хăй тытăмлăх органĕсемпе пĕрле никĕс шкулсен, ресурс центрĕсен тата професси пĕлĕвĕ паракан учрежденисен вăй-хăвачĕпе усă курса профиль инженер класĕсем уçас тĕлĕшпе хастарлăн ĕçлемелле. Çак енĕпе Чăваш Енри лайăх опыта анлăн сармалла. Эпир вара унччченхи пекех ĕç паракансемпе пĕрле республикăри организацисене специалистсене ĕçе тĕллевлĕн вырнаçтарас енĕпе тăвакан ĕçе малалла тăсăпăр.

Вĕренӳ ĕçĕнчен **граждансен хăрушсăрлăхĕ** çине куçнă май, Çĕнĕ Шупашкарта ĕçлеттерсе пăхнă йĕркесĕр çемьесен даннăйсен банкĕпе микрорайонăн социаллă карттине тепĕр хут аса илес тетĕп. Мĕншĕн тесен Чăваш Ен Шалти ĕçсен министерствин çула çитмен çамрăксем тăвакан преступленисен кăтартăвĕ хальлĕхе лайăх шайра мар-ха.

Юлашки çулсенче преступленисен шайĕ чакса пынине, вĕсене уçса парас шай вара 71 процент кăтарту çывăхĕнче çирĕппĕн тытăнса тăнине пăхмасăрах, граждансен хăрушсăрлăхĕпе çыхăннă лару-тăру çаплипех пăшăрхантарать. Пирĕн кăтартусем федерацин Атăлçи округĕнчи тата Раççейри вăтам кăтартуран лайăхрах пулни право йĕркине тивĕçтерекен тытăмсене лăпланса ларма ирĕк памасть. Граждансен çынна тата унăн пурлăхне тапăнасран хӳтĕлекен ĕç пахалăхĕпе шайĕ палăрмаллах ӳсессине кĕтме ирĕк пур.

Çавăн пекех çакна палăртас тетĕп: пурнăç пахалăхĕ лайăхланнăран уйрăм çынсем тытакан автотранспорт шучĕ пысăкланни çул-йĕр çинчи траспорт инкекĕсен йышне ӳстерет. Вĕсенче вара водительсем кăна мар, çуран çӳрекенсем те вилеççĕ, аманаççĕ. Çак цифрăсем пирки шухăшласа пăхма ыйтатăп: кăçал кăна çул-йĕр паравилине пăснă 310 пин ытла тĕслĕхе тупса палăртнă, руль умне ӳсĕр пуçпа ларнă тăватă пин ытла çынна административлă майпа явап тыттарнă!

Патшалăх Думин çĕнĕ йышĕн депутачĕсене çакăн пек наказ парас килет – çулйĕр правилисене пăснăшăн тыттаракан яваплăха тата та çирĕплетмелле.

Сăмах май, Раççей Федерацийĕн шалти ĕçсен министрĕ Рашид Гумарович Нургалиев пирĕн республикăна визитпа килни эпир тĕрĕс çулпа пынине çирĕплетрĕ. Чăваш Енре пурнăçланакан «Хăрушлăхсăр хула» программа йĕркене пăсакансемпе чи тĕрĕс майпа – çулсем çине сăнакан камерăсем вырнаçтарнине пула пĕтĕмĕшле тĕрĕслев йĕркелесе – тухăçлăн кĕрешме пулăшать. Эпир тĕп хулана икĕ çул хушшинче çĕнĕ оборудованипе тивĕçтерме хамăр çине обязательствăсем илтĕмĕр тата пирĕн программăра палăртнă пĕтĕм ĕçе пурнăçламалла.

Преступлени тăвасси, ĕçкĕпе иртĕхни тата хулиганлăх чăн малтанах чунсăрлăхпа çыхăннă. Ăс-хакăла йĕркелесси вара– кăткăс тата вăрах ĕç, унта хутшăнакан та чылай – çемье, шкул, культурăпа кану институчĕсем. Модернизаци ĕçне пурнăçа кĕртнĕ май вĕсен статусĕ ӳсет, вĕсене экономикăна аталантармалли ресурс, социаллă çирĕплĕх факторĕ тата территори имиджĕ пек хаклаççĕ. Пирĕн мĕн пур ял тăрăхĕсенче культура ыйтăвĕсемпе çине тăрса ĕçлемелле, çĕр çинче пурăнакан мĕн пур халăхăн культура еткерне пропагандăламалли кашни майпах усă курмалла.

Кăçал пирĕн пата библиотекăсене аталантарассипе çыхăннă чăваш опычĕпе паллашма пĕтĕм Раççей килчĕ. Информаципе çыхăнăвăн çĕнĕ хатĕрĕсем аталанса пынине пăхмасăр, библиотекăсем, уйрăмах ялсенче, халăхăн пысăк пайĕшĕн пĕлтерĕшлĕ центрсем пулса тăраççĕ. Пирĕн тĕп тĕллев – халăх **культура ырлăхĕсемпе тата пулăшăвăн мĕн пур тĕсĕпе** ирĕклĕн тата пĕр тан усă курма пултарассине тивĕçтерме майсем туса парасси.

Культура министерствине отраслĕн Аталану концепцине туса хатĕрлеме хушатăп, унта пурлăх аспектне кăна мар, чăн малтанах, хальхи чĕлхепе каласан, çынна ăс-хакăлпа кăмăл-сипет тĕлĕшĕнчен воспитани памалли пĕтĕм тренда, республика территорийĕнче ĕçлекен культурăн мĕн пур институчĕн малашлăхри ĕçне шута илмелле.

Культурăна пулăшассине вăйлатмалла. Анчах та çак ĕçре тăрăшакансем хăйсем те гуманитари программисен пĕлтерĕшне лайăх ăнланаççĕ. Пирĕн музейсенче нумай ачаллă çемьесем, инвалидсем, ачасем тата пенсионерсем ятарлă çăмăллăхсемпе усă кураççĕ. Куракапа, вулаканпа хутшăнса ĕçлемелли çĕнĕ майсем аталанаççĕ. Çавнашкал «искусствăпа ятран сиплени», енчен те çак ĕçе професси тивĕçĕпе кăна мар, пĕтĕм чунчĕререн тусан ăнăçлăхпа палăрма тивĕç.

Патшалăх ăс-хакăл ĕçне пулăшма пултаракан мĕн пур вырăнта пирĕн пурин те тăрăшса ĕçлемелле. Паян ачасене телевизор экранĕнчен, вĕççĕр-хĕрсĕр Интернетран йăтăнса тухакан япăх витĕмрен хӳтĕлеме питех те йывăр. Çавăнпа та наци пуласлăхĕн ăс-хакăл сывлăхне упраса хăварас тесен пирĕн ашшĕ-амăшĕн яваплăхне ӳстермелле.

Çыншăн **сывă пурнăç йĕркине тытса пыма май пулни те** пысăк пĕлтерĕшлĕ. Чăваш Ен физкультурăпа спорта аталантарас, спорт шкулĕсен йышĕпе, çĕршыври пĕрлештернĕ командăсен членĕсен хисепĕ енĕпе малтисенчен пĕри шутланать. 2010 çул пĕтĕмлетĕвĕ тăрăх эпир физкультурăпа тата спортпа туслă граждансен йышĕпе Раççей Федерацийĕн субъекчĕсен хушшинче виççĕмĕш вырăнта тăратпăр /пирĕн кăтарту 27,9 процент, Раççейри вăтам кăтарту – 18,5 процент/. Пирĕн тĕллев – 2020 çул тĕлне ку кăтартăва 40 процента çитермелле.

Çакăн валли эпир майсем йĕркеленĕ: çитес çул вĕçнелле республикăн мĕн пур районĕнчех физкультурăпа спорт комплексĕсем ĕçлеме пуçлаççĕ. Черетре – футбол уйĕсем тата стадионсем тăвасси, пур пек спорт сооруженийĕсене юсаса çĕнетесси. Тата чи кирли – эпир Чăваш Ен тĕп хулинче виççĕрен кая мар ФСК тума тĕллев лартатпăр. Хулара пурăнакансем хăйсемшĕн тата хăйсен ачисемшĕн çавăн пек майсене тахçантанпах кĕтеççĕ ĕнтĕ. «Газпром» АУО ертӳçисен йышăнăвĕпе тата «Пĕрлĕхлĕ Раççей» политика партийĕ пулăшнипе республикăн тĕп хулинче **7500 çын вырнаçмалăх, икĕ катоклă** тата машинăсем лартмалли вырăнлă нумай ĕç-хĕллĕ хальхи вăхăтри **Пăр керменĕ** тума пуçланă. Проект хакĕ – 1 миллиард та 200 миллион тенкĕ. Ку объекта 2013 çулхи Çĕнĕ çул тата Раштав уявĕсем тĕлне хута ямалла.

**Халăх пурнăçне лайăхлатас тĕллев республикăн пĕрлештернĕ бюджечĕн укçи-тенки шутне ӳстерме хистет.** Çавна май патшалăх органĕсен тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен çакна пурнăçлама сахалтан та икĕ ĕçе тивĕçтермелле: налук тӳлекенсен укçи-тенкипе тухăçлă усă курмалла тата республика территорийĕнче бюджет майĕсене ӳстермелли çĕнĕ тупăшсем тума хастарлăн пулăшмалла.

Общество финанс тытăмне реформăлассинче малтисем пулнă май, эпир Раççейри чи усăмлă финанс тытăмĕн ятне тивĕçрĕмĕр, бюджет йĕркелемелли программа-тĕллев мелĕсем енĕпе çĕнĕ норматив-право никĕсне йышăнтăмăр, вăл вара каярах Раççей Федерацийĕн Бюджет кодексĕн нормисен йышне кĕчĕ. **Эффективлăхăн пĕтĕмĕшле шайĕпе Чăваш Ен Раççей регионĕсен хушшинче малти пилĕк лидер йышĕнче.**

Эпир çавăн пекех çĕр-шывра пĕрремĕш пулса Чăваш Республикин патшалăх программисене туса хатĕрлесси, пурнăçласси тата хакласси çине çĕнĕлле пăхассине ĕçе кĕртрĕмĕр. Программăсен шайĕнче йĕркеленекен республика бюджечĕн тăкакĕсен танлаштаруллă виçи 74,5 яхăн процентпа танлашнă. Тăкаксене планламалли çавнашкал тытăма пирĕн муниципалитет шайĕнче те ĕçе кĕртмелле тесе шухăшлатăп. Бюджет тăкакĕсен пахалăхĕпе тухăçлăхне тата та ӳстерес тесен вара пирĕн 2012 çултан пуçласа муниципалитетсенче те виçĕ çуллăх бюджетсем çине куçмалла. Çавнашкал тĕплĕн планлани федераци влаç органĕсемпе регион влаç органĕсем, çавăн пекех регионсемпе муниципалитетсен хушшинчи полномочисене уйăрассине лайăхлатма май парать. Çакă бюджетсене шайлаштарас тĕлĕшпе тăвакан ĕçре çав тери пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Эпир хамăрăн тĕп программăн, Чăваш Республикин Социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕн 2020 çулччченхи стратегийĕн, положенийĕсене тепĕр хут пăхса тухса çĕнетрĕмĕр. Унăн тĕп тĕллевĕ – экономикăн конкуренци пултарулăхне пысăклатса тата ăна кал-кал аталантарса халăх пурнăçĕн пахалăхне тата ытлăх-çитлĕхне ӳстересси. Çĕнетнĕ стратегире инновацисене, нано- тата биотехнологисене хăвăрт аталантарассине, энерги тухăçлăхне, ресурссене перекетлессине, çынна хывакан инвестицисене тĕп вырăна хунă.

**Çын капиталне хывакан тухăçлă технологисен шутне республика гражданĕсене пулăшас енĕпе тăвакан ĕçе кĕртетĕп.**

Раççей Федерацийĕн Президенчĕ тата Раççей Правительствин Председателĕ Тăван çĕр-шыв ырлăхĕшĕн вăрах вăхăт ĕçленĕ, халĕ унран пулăшу кĕтекен çынсене тата паян ачасем пăхса çитĕнтерсе патшалăх вăй-хăватне ӳстерекенсене – нумай ачаллă тата çамрăк çемьесене социаллă хӳтлĕх памалли политикăна хастарлăн пурнăçа кĕртеççĕ.

Юлашки 10 çулта ватлăхпа паракан ĕç пенсийĕн вăтам виçи ултă хут ӳсрĕ. Социаллă пенсин вăтам виçи пенсионера пурăнма кирлĕ республикăра çирĕплетнĕ чи пĕчĕк виçерен пысăкрах. Çитес çул ĕç пенсийĕсене тата 9,6 процент чухлĕ индексацилеççĕ. Чăваш Енре ĕçлеме пултаракан ӳсĕмрен аслăрах граждансен 80 проценчĕ хушма социаллă пулăшу илсе тăрать. Çак тĕллевсем валли республика бюджетĕнчен кăçал 1 миллиард та 590 миллион тенкĕ уйăрнă, тепĕр çул вара – 1 миллиард та 786 миллион тенкĕ /ӳсĕм 12,3 процент/. Сăмах май, финанс кризисĕн условийĕсенче тĕнчери пĕр çĕр-шыв та пенсионерсене çавнашкал пулăшу пама палăртакан йышăнусем туман.

Юпа уйăхĕнче эпир пĕлтерĕшлĕ тепĕр йышăну турăмăр – «Чăваш Республикин ĕç ветеранĕ» ята илме право пур граждансен ушкăнĕсен йышне ӳстертĕмĕр. 26 пин пенсионер республика бюджечĕн укçи-тенки шучĕпе социаллă пулăшу илĕ. Указа пурнăçланине шута илсен Чăваш Енре пурăнакансен 20 проценчĕ /кашни пиллĕкмĕш çын/ республика тата федераци бюджечĕсенчен социаллă пулăшу илме пуçлĕ. Иккĕмĕш тапхăр – çав ӳсĕме арçынсемшĕн 40, хĕрарăмсемшĕн 35 çула çити чакарасси – республика экономики, урăхла каласан, эпир пурте тухăçлă ĕçлесе пырсан чи çывăх вăхăтрах пурнăçа кĕрĕ.

Раççей Президенчĕ Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин ветеранĕсене, вăрçăра вилнĕ тата вилнĕ вăрçă участникĕсен çемйисен членĕсене пурăнмалли çурт-йĕрпе тивĕçтерес ыйтăва пысăк вырăна хурать. Чăваш Енре 3820 çынна пурăнмалли çурт-йĕрпе тивĕçтернĕ ĕнтĕ, çитес çул ку ыйтăва татса паратпăр. Эпир çавăн пекех тăлăх ачасене тата нумай ачаллă çемьесене пурăнмалли çурт-йĕрпе тивĕçтерсе курăмлă пулăшу кӳтĕмĕр. Нумай ачаллă çемьесене çĕр лаптăкĕсемпе тивĕçтерес ыйтăва эпир Атăлçи федераци округĕнче пуринчен те активлăрах татса паратпăр.

Çак кунсенче эпĕ республикăн амăшĕн капиталĕ çинчен калакан Указа алă пусрăм. Çемьери виççĕмĕш ача Чăваш Ен бюджетĕнчен 100 пин тенкĕлĕх пулăшу илме ирĕк парать. Çĕнĕ çултан пуçласа федерацин амăшĕн капиталĕн виçи – 387 пин тенкĕ. Республикăн амăшĕн капиталĕ нумай ачаллă телейлĕ çемье йĕркелеме патшалăх енчен сĕнекен хушма хавхалантару шутланать, çавна май эпĕ кĕтнĕ ачасем çураласса шанатăп.

Ку тĕлĕшпе патшалăх çамрăксене кӳрекен пулăшу та кăтартуллă. Кăçал 1600 ытла çын хăйсен ĕçне йĕркелеме субсидисемпе грантсем илнĕ. Вĕсене çурт-йĕр ыйтăвне татса пама та активлăн пулăшатпăр. 2003 çултан пуçласа Чăваш Енре ялăн социаллă аталанăвĕн программи шайĕнче халĕччен пулман пулăшу паратпăр: 35 çултан аслă мар çамрăк çемьесене тата специалистсене пурăнмалли çуртăн шутласа палăртнă хакĕн 70 процентне, ыттисене – 45 процентне саплаштаратпăр. 2011 çулта пĕрремĕшсене тӳленĕ социаллă тӳлевĕн вăтам виçи 585 пин тенкĕпе, иккĕмĕшсен вара – 360 пин тенкĕпе танлашнă. Кăçал эпир «Пурăнмалли çурт-йĕр» программăна çĕнĕрен йышăнтăмăр, унпа килĕшӳллĕн субсидисен виçи, çемьере миçе ача пулнине кура, 35 процентран пуçласа 45 процентпа танлашать.

Патшалăхăн пурăнмалли çурт-йĕр фончĕн проектне хутшăнакан граждансене паракан социаллă пулăшу та пĕлтерĕшлĕ – кунти çурт арендин хакĕ пурăнмалли çурт-йĕрĕн уйрăм çын рынокĕнчи хакран ик-виçĕ хут сахалрах. Ку программа тăрăх эпир бюджет сферинче ĕçлекенсене тата çамрăк çемьесене, вĕсен йышĕ программăна хутшăнакансен 60 проценчĕнчен кая мар, пулăшатпăр. Пирĕн ипотека енĕпе пулăшу памалли темиçе май пурнăçланать. Ипотека кредичĕсене кăçал виçĕ миллиард ытла тенкĕлĕх панă. Кăçалхи юпа уйăхĕнче вара эпĕ шăпах кивçен илекен çамрăк çемьесене хушма пулăшупа тивĕçтерекен, вĕсене кредит линине 10 çула çулталăкне 5,5-7% шайпа, çакă рынокри ставкăсенчен икĕ хут сахалрах, йĕркелеме май паракан Указа алă пусрăм. Патшалăх сĕнекен çак майпа 6,5 пин çемье /ку вăл çавнашкал пулăшăва илес текенсен 40 %/ усă курма пултарать.

Сăмах май, тепĕр хут палăртатăп: Чăваш Енре хулапа ял хушшинчи уйрăмлăха, пире тем пек шантарнăччĕ пулсан та, совет саманинче мар, халĕ, экономикăшăн чи йывăр çулсенче пĕтертĕмĕр. Çын пурнăçне çăмăллатакан питĕ лайăх инфратытăм йĕркеленĕ, ваттисем калашле, пурăн, ĕçле тата çитĕнӳсемшĕн савăн!

Патшалăх хулари çулсене тата картишсене йĕркене кĕртес ыйту çине пачах урăхла пăхма пуçланине те палăртса хăваратăп. Кăçал çулла «Раççей хулисенчи çĕнĕ çулсем» проект шайĕнче Чăваш Ен федераци бюджетĕнчен 344,8 миллион тенкĕ илчĕ, çакă юсав ĕçĕсем ирттермелли картишсен хушшинчи çулсене тата тăкăрлăксен 40 % юсама, Калинин урамне юсаса çĕнетме май пачĕ. Шупашкарта пурăнакан ачасем валли вара ача-пăчан 109 спорт хулашне йĕркеленĕ. Ку ĕçе малалла тăсăпăр, çав шутра республикăра йĕркеленекен, туса хумалли саккуна хатĕрлесе çитернĕ Çул-йĕр фондĕнчен укçа-тенкĕ уйăрса та.

**Граждансене паракан хӳтлĕх хыççăн патшалăхăн чи пĕлтерĕшлĕ тепĕр тĕллевĕ, ман шутпа, — экономика рынокне хутшăнакансене пулăшасси.**

«Йĕркесене пăхăнса вылякан» тата хăвăрт тупăш илме кăна тĕллев лартман, хăй ĕçлекен территорие аталантарас тĕлĕшпе хăйĕн социаллă яваплăхне /ку вара налуксене тӳрĕ кăмăлпа тӳлемеллине, çĕнĕ ĕç вырăнĕсем йĕркелемеллине, хăйĕн ĕçченĕсене тивĕçлĕ ĕç укçи тӳлемеллине пĕлтерет/ туякан бизнес патшалăх пулăшăвне илме тивĕç.

Асăннă пулăшу пирĕн тӳрĕ инвестицисем хывнинче, налук çăмăллăхĕсем панинче, çавăн пекех укçапа çыхăнман пулăшу майĕсемпе тивĕçтернинче палăрать. Эпир административлă чăрмавсене сирмелли ятарлă программа йышăнтăмăр, Шупашкарти нумай функциллĕ центр та хăйне лайăх енчен кăтартрĕ, унта халăха тата организацисене патшалăх тата муниципалитет паракан 320 ытла пулăшу ĕçĕпе тивĕçтереççĕ. Çулталăк вĕçĕччен çавнашкал центр Çĕнĕ Шупашкар, Улатăр хулисенче хута каять, ку енĕпе тата 17 муниципалитет пĕрлĕхĕнче ĕç пуçланă.

«Чăрмавсăр» экономика хутлăхне туса хурассинче муниципалитет шайĕнче те, регион шайĕнче те пĕрле хутшăнса ĕçлемелли мĕн пур майсене çырса палăртнă административлă регламентсене йышăнни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Тӳрĕ мар кăмăллă инвестортан сыхланмалли лайăх мел вара малтанласа килĕшӳсем тăвас шайри яваплă ĕç пулса тăмалла, çав килĕшӳсенче енсен тивĕçĕсене уççăн та ăнланмалла çырса палăртмалла. Çапла тусан нимле йывăрлăх та пулмасть.

Чăваш Ен экономикишĕн никĕсри тытăм – пĕчĕк тата вăтам бизнес. **Юлашки икĕ çулта мĕн пур бюджетăн укçи-тенки шучĕпе паракан патшалăх пулăшăвĕ икĕ хут ӳсрĕ тата 300,3 миллион тенкĕпе танлашрĕ.** Гаранти фондне туса хунă, вăл банксене 60 яхăн гаранти уйăрса панă, Кредитсем паракан агентство та хастар ĕçлет, унта предприниматель 1 çул таран вăхăта 1 миллион тенке çити кредит илме пултарать. Кăçал 260 займ панă, агентство филиалĕсене Канаш, Улатăр, Çĕнĕ Шупашкар хулисенче уçнă.

Çавăн пекех 300 пинрен пуçласа 1 миллион тенкĕ таран пулăшу памалли грант системи ĕçлет тата организацисемпе предпринимательсен тăкакĕсен пĕр пайне 5 миллион тенкĕ таран субсидилессине йĕркеленĕ. Пĕчĕк предпринимательлĕх кунĕсене мĕн пур хулапа районтах ирттереççĕ, консультаци пулăшăвĕ парас ĕç йăлана кĕнĕ. 2012 çулта Элĕкпе Муркаш салисенче тата 2 бизнес-инкубатора хута яратпăр. Пĕчĕк тата вăтам бизнес организацийĕсене пысăк ăсталăхлă кадрсемпе тивĕçтерес тĕллевпе 2012 çултан пуçласа Чăваш Енре пĕчĕк тата вăтам предприятисене вĕренӳ ĕçĕсемшĕн тӳлеме субсидисем уйăрса пама палăртнă.

**/Вĕçĕ 3-мĕш стр./.**